Вг. №106.
2927
40-62





Иван Малгай



# СӐВӐСЕМ








ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
20/VII июля 1940 г.
Подпись

ИВАН МАЛГАЙ

# САВАСЕМ

Ӳкерчӗкӗсене
*А. Чирков* тунӑ.



ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР □ 1940

*КĔÇĔН ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЛЛИ*

*Ывăлăма, Алекона юратса*

# ЧЕЧЕК



Чечен чечек çурлать хитре
Таса та аслă пӳлĕмре,
Кăвак çут кантăк умĕнче
Ларать çилпе вăл чӳхенсе.

Ман кантăк уçă паçăрах
Ăна эп уçнă ăшăран,
Тулта илемлĕ çуркунне,
Шăнкăрч юрлать хăй юррине.



Чечек çине пăхса ларап,
Эп хамăн аслă залăра.
Вăл çамрăк, çурăлчĕ кăна,
Вăл лĕпĕш евĕр туйăнать.

Пăхатăп тимлĕн тинкерсе,
Ак, çилĕ карĕ сĕрĕнсе.
Чечек пĕр юлчĕ хумханса,
Çулçи çине кăшт тайăнса.

Таса та аслă пӳлĕмре
Чечек татах çурлать хитрен.
Чечеклĕ, çутă ĕмĕре
Саватăп эпĕ чĕререн.

# ПИРĔН ÇУЛПУÇ

Вăл пире тăван пек хисеплерĕ,
Пĕтĕм халăх юрататъ ăна.
Манас çук нихçан та ăна эпĕр,
Манас çук нихçан та Сталина.

Вăл пире çĕршывăн хуçи турĕ,
Тулăх пурнăç пачĕ вăл пире.
Вăл—хавасла çута пурнăç пирĕн!
Сталин ячĕ пирĕн чĕрере.

Вăл пире хавасла юрă пачĕ,
Пирĕншĕн çутатрĕ хĕвеле.
Сталин—аслă çĕршывăн хăвачĕ,
Пур ĕçхалăх хăвачĕ, телей!

Вăл пире çӳлтен-çӳле хăпартрĕ,
Вăл çитерчĕ Çурçĕр полюсне.
Вăл пире ӳстерчĕ тимлĕн, пачĕ
Чи телейлĕ пурнăç законне.

Ĕççынне хĕвеллĕ çул кăтартрĕ,
Аслă гени—Ленинпа пĕрле.
Яланах эпир ăшра усратпăр,—
Унăн чаплă мухтавлă ятне.



# ЭПИР ЧЕЧЕК

Çĕршывӑн ем-ешĕл чечекĕ эпĕр,
Хĕрӳллĕ Октябрь çитсессĕн эпĕр
Шӑтса çеçкеленнĕ. Пире нихăçан.
Пире нихăçан пусмăрлаймĕ тăшман.

Ӳсетпĕр хаваслăн Совет çĕрĕнче,
Вылятпăр, кулатпăр хĕвел шевлинче.
Юратнă аттеçĕмĕр Сталин пире
Ачашшăн та тимлĕн пăхса ӳстерет.

Пирте хĕрлĕ галстук хитрен йăл-
кăшать,
Хĕвел çутатать, вăл çĕклет шухăша.
Тулли ĕмĕтсем çĕкленеççĕ пирте,
Ӳсетпĕр патвар Сталинла ĕмĕрте.

---

# ЛЕТЧИК ПУЛАТĂП



Сассисем кĕрлеççĕ
Хурçă кайăксенĕн,
Çунатсем çиçеççĕ
Хĕвелпе вĕсенĕн.

Ярăнса иртеççĕ
Пирĕн пӳртсем çийĕн,
Çĕнтерӳ илеççĕ
Инçе вĕçнĕ çемĕн.

Эп сăнап ялан та
Вĕсене ир-ирĕн.
Сахал мар хумхантăм,
Ăсатса пĕрерĕн.



Чĕрере пĕр шухăш—
Шухăш та пĕр ĕмĕт
Пултăр уçă сывлăш,
Летчик пулас, тетĕп.

Пурнăçлатăп пурпĕр,
Летчик эп пулатăп.
Курăр, мана курăр,
Эп çӳле ухатăп.



Чи çӳлтен иртетĕп,
Эпĕ те пĕр шикеĕр.
Колхоза килетĕп,
Çыру çырăп, кĕтĕр.



# САЛАМ

Çыртăм эпĕ ăш салам.
Юратса сире калам...

Эп палланă çамрăк Генă
Пултаруллă пионер.
Ăна çутă орден панă—
Вăл пуриншĕн те пример.

Унăн ĕçĕ пулнă йăвăр
Малалла çакна астăвăр:

Генă ларнă пулăра
Çӳллĕ, чăнкă çыранра.
Хĕвел кайнă анăçа
Киле чĕннĕ пулăçа.

Анчах, Генă васкамасăр,
Ларнă шăппăн пул тытса,
Вăлтине алран ямасăр,
Тăрă шыв çине пăхса.

Ак, вăл курнă: пĕр хĕрарăм
Ун патне пырать вăрахăн.

Çитсе тăнă ерипен
Утса, шывăн хĕррипех.
Шырап, тенĕ, вăл пăру
Генă туйнă,—юптару.

Ма, тесессĕн, пулнă паллă
Янаххи кĕске сухаллă.
Тумĕ çеç ун урăхла,
Вăл тумланнă хĕрарăмла.

Илсе кай-ха килна, тенĕ,
Çав „хĕрарăм“ çав этем.
Ыйтусем пама пикеннĕ,
Генăна хăй ерипен.

Хăваттер тупасчĕ кĕçĕр
Урасем, тет, ырса çитрĕç.

Вĕсем кайнă ялалла,
Иккĕш утнă малалла.
Генă пынă шутласа,—
Чеелле ăс шыраса.

* *
*

Генă амăшĕ кăшт туйрĕ,
Апатне ют çыншăн лартрĕ.

Генă çакă вăхăтра
Чупса карĕ хăвăртрах
Хăйсен ялăн советне
Председателĕ патне.

Председатель чупса çитнĕ
«Хĕрарăма» час тĕрĕсленĕ.
Ку вăл пулнă шпион—
Хура çын та хура юн.

Генă çакăншăн кайран
Орден илнĕ Мускавра.
Акă мĕншĕн эп калам,
Çыртăм унщăн ăш салам.



# ПИОНЕР CĂMAXĔ

Эп паян модель вĕçтертĕм,
Модель карĕ инçене.
Пĕлĕтех ăна çитертĕм,
Вăл çĕкленчĕ тӳпенех.

Савăнса çеç пăхса тăтăм,
Хĕпĕртерĕм чĕререн
Чăтаймарăм, кулса ятăм,
Модель вĕçрĕ тӳпере.

Самолет вăл, хам эп турăм,
Вĕçтĕр, терĕм инçене.
Янкăр, уçă пĕлĕт тăрăх
Кайтăр, терĕм вĕçĕмех.

Хурăнсем питех те çӳллĕ
Вĕсенчен те çӳлерех,
Вĕçсе килчĕ ман моделĕм,
Пĕр ванмасăр чиперех.



# ПИЧЧЕ

Эс хура çăхан, ан явăн
Пирĕн çирĕп чикĕре.
Пулин пултăр каçĕ тĕттĕм,
Эс кĕреймĕн пурпĕрех.

Питĕ анлă çĕршыв пирĕн
Таçтанах вăл тăсăлать.
Тăшманран ăна пит тимлĕн
Ман пичче те хуралласть.

Каш-кашлати çӳллĕ хăмăш,
Кĕр-кĕрлети сĕм вăрман,—
Чикĕ урлă, çук, каçаймăн
Нихăçан та эс, çăхан.

Хуралла пичче эс çирĕп,
Çак телейлĕ çĕршыва.
Ӳссен эпĕ те çитетĕп,
Сыхламашкăн пурнăçа.

Унчух эп те сан пек тăрăп,
Куç хупмасăр чикĕре.
Питĕ чыслăн эп хураллăп
Тулли, çутă ĕмĕре.



## МАЙ

Паян тӳпе таса та тӑрӑ,
Симӗсленен ҫӗршыв хитре.
Туллин янрать телейлӗ юрӑ,
Телей шевли кашни питре.

Мӗнчул ялав, ӑҫта ун шучӗ,
Эпир ҫӗкленӗ вӗсене.
Утса, утса пыратпӑр уҫҫӑн
Мала утатпӑр вӗҫӗмех.

Мая сума суса юрлатпӑр,
Мая сума сӑвать тӗнче.
Кӗрешӳри вӑя сӑнатпӑр
Паян ҫӗршыв илемӗнче.

Ёнер кӑна ҫусаччӗ ҫӑмӑр,
Паян мӗн пек уяр тӳпе.
Ҫӗршыв хуҫи халь чӑн та хамӑр,
Хӗвел вылять пирӗнпеле.

---

# КАЯР ÇЫРЛАНА

Вăрман кĕтсе илĕ хаваслăн пире,
Каяр çырлана ыран эпĕр ирех.
Тин çеç пиçсе çитнĕ парка çырласем
Лараççĕ унта илĕртсе йĕркерен.

Таса кĕмĕл сывлăм йăлтах пĕтиччен.
Çăра симĕс курăк типсе çитиччен
Çитер вăрмана, эпĕр тантăш çитер,
Ирхи хĕвел йăлкăштăр пирĕн питре.

Эп лайăх пĕлетĕп ăçта çырла пур,
Пухса пĕтереймĕн, пырсан пăх та кур.
Тататпăр, çиетпĕр, пухатпăр хĕрсе,
Киле илсе килĕпĕр шăп пĕр чĕрес.

Каяр çырлана ыран тантăш ирех
Вăрман кĕтсе илĕ хаваслăн пире.
Сана эп шанатăп, кĕтетĕп ыран.
Хĕвел тухсанах ман пата эс пыран.



# ЧӖВӖЛ ЧӖКЕÇСЕМ



Чӗвӗлтетрӗç чӗвӗл чӗкеçсем
Янкăр пӗлӗт айӗн пӗр вӗçсе.

Вӗçсе иртрӗç çӳлтен ярăнса,
Сывлăшра хăюллăн хумханса.

Ачасем килеççӗ çырларан
Яла çитрӗç, кӗчӗç хапхаран.

Чӗвӗлти чӗкеç пек кашниех
Калаçаççӗ, кулаççӗ питех.



Чӗкеçсем вӗçеççӗ аялтах
Çилӗ çуккă. Лăпкă-çке ялта.

Трактор çеç хаваслăн мӗкӗрет,
Сухалать колхозăн уй-хирне.



Çурхи ăшă, тӳлек сывлăшра
Ун сасси юхать-çке уй урлах.

Каçӗ çитрӗ, тухрӗç çăлтăрсем
Курăнмаççӗ чӗвӗл чӗкеçсем.

Ыран тухӗç каллех ярăнса,
Пӗлӗт айӗн вӗçме хумханса.

---

# ÇУ КУНĚ



Умăмра хитре таса çу кунĕ.
Ăшăмра çĕн юрă çĕкленет,
Ни кичем, ни йăвăрлăх çук унăн,
Ман çĕршывăм йăлт чечекленет.

Шерепеллĕн çĕмĕртсем пиçеççĕ,
Вăрманта тулаççĕ мăйăрсем.
Кăçал ӳснĕ кайăксем вĕçеççĕ,—
Пахчара та хирте вĕренсе.



Эпир лайăх канса иртеретпĕр,
Çуллахи чи чаплă вăхăта.
Кĕр çитет. Вĕренме кĕретпĕр,
Вĕренетпĕр отлично татах.

---

# ПАХЧАНА КĔРСЕ...

Паян юри ир кĕтĕм пахчана
Йĕр йĕрлесе утмашкăн сывлăм çийĕн.
Суймастăп тантăш, çавăнпа чăнах
Эп çӳрерĕм утса сывлăм çийĕн.

Атте лартса хăварнă йывăçсем
Папкисене кăларнă, ешĕреççĕ.
Улма тума пуçлан улмуççисем
Чечек çурса илемлĕн ешĕреççĕ.

Пĕр туратне хуçса илсе хуллен
Анне патне илсе кĕрессĕм килчĕ.
Чечексем пек эпир те вĕт çуллен
Çеçкеленсе пыратпăр, тессĕм килчĕ.

Ытарма çук, ытла та пит хитре
Хуçса илме çитмерĕ манăн кăмăл.
Ах, ăçтан вăл пулĕ чĕремре
Чечеке хуçмашкăн пур-и кăмăл.

Ман аннем ăнланĕ пурпĕрех
Эп калам та хăй вăл тухса куртăр.
Пирĕн пурнăç çав тери чипер,
Аннем сывă пурăнтăр, хăй куртăр.



# УЛĂХ



Ешĕл улăх, симĕс улăх
Ытарми илемлĕ.
Саншăн манăн кăмăл тулăх,
Йăлкăшать хĕвелĕ.

Эп утатăп, утнă çемĕн
Чечексем пухатăп.
Аслă симĕс улăх çийĕн
Таврана сăнатăп.

Сывлăм сыпнă чечек, курăк.
Йĕр юлать хыçра ман.
Карăш, карăш кăмăл турĕ,
Сас парса хавассăн.

Эп пыратăп. Кĕмĕл саслăн
Кайăксем юрлаççĕ.
Пурнăç тулăх, пурнăç аслă,
Шухăшсем чупаççĕ.

Улăх тăрăх Пушанарĕ
Çуталса юхать те,
Куçăм, куçăм йăлт сăнарĕ
Вăл инçе каятĕ.



Ешĕл улăх, симĕс улăх
Ытарми илемлĕ.
Саншăн манăн кăмăл тулăх,
Кăмăллă хĕвелĕм.

Саншăн эпĕ хĕпĕртетĕп,
Саншăн чунăм савăк.
Çăралса эс, ешĕр тетĕп.
Саншăн çакă сăвă.

Кайăксем татах юрлаччăр,
Лĕпĕшсем те вĕççчĕр.
Ак, кĕçех çулма тухатпăр,
Виçмене е кĕçĕр.

Чăштин-чаштин çава янрĕ
Ытарми илемлĕн.
Шăнкăр-шăнкăр Пушанарĕ
Юхĕ пит тӳлеккĕн.



# ПИРĔН КӐ̆ЛĔ

Пирĕн пӳртĕм умĕнче
Çавракa та тарӑн кӳлĕ
Çуталса выртать.
Кашни кун ун çийĕнче
Йӑлтӑрать-çке çут хĕвелĕ
Чаплӑн ӑшӑтать.

Темĕн чухлĕ пулӑсем
Урлӑ-пирлĕ ярӑнаççĕ,
Выляса çӳреç.
Галстук çыхнӑ ачасем
Ирсерен пулла пыраççĕ
Шуçӑмла, ирех.

Колхоз тунӑ çак кӳлле,
Колхозра эпир те—
Сакӑр çул шӑпах.
Сарӑ, ылттӑн хĕвеле
Кӳлĕ ӑшшӑн илĕртетĕ
Сассӑр, çутӑпа.

---



# КОСТЁР

Хĕвел пытанчĕ халь кăна,
Шур уйăх тухрĕ çеç.
Рожок сассийĕ хăлхана
Ак, çитрĕ çĕкленсе.

Янратрĕ уççăн йăлăма
Сас карĕ инçете.
Эпир вĕт тухнă уçăлма,
Пурнатпăр лагĕрте.



Костёр чĕртетпĕр мухтанса,
Юрлатпăр юрăсем.
Вут-çапă селĕмĕн çунсан
Тăрать хĕм сирпĕнсе.

Ак, йĕркерен карталанса
Пĕр юрă юрласан,
Вожатый пирĕн васкаса
Вут чĕртрĕ савăнса.

Костёр тавра ута-ута
Калатпăр сăвăсем.
Пирĕнпелех пичче кунта
Эпир ăна чĕнсе.

Вăл пулнă пĕлтĕр Хасанра
Çĕмĕрнĕ тăшмана.
Хасан кÿлли, тет, асăмрах
Пултарас çук, манма.

Эпир, тет, Сталин ячĕпе
Çапăçува кĕрсе,
Эпир çĕршыв хăвачĕпе
Атакăна кĕрсе.

Тăшмансене çĕмре-çĕмре
Çĕнтерлĕ, тет, пичче.
Паман касмашкăн чикĕрен
Паман, тет, иртĕхме.

Нумай каларĕ вăл пире
Пулса иртни çинчен.
Эпир, тет, вăйлă тĕнчере
Мĕн пур çĕршыв çинче.



Итлерёмёр нумай, нумай
Пичченён сăмахне.
Костёр илемлĕ çуннă май
Юрлатпăр юррине.

Хĕвел пытаннă паçăрах,
Шур уйăх тӳпере.
Рожок сасси каллех янрать
Вăл йăхăрать пире.

Эпир каятпăр лагере,
Утатпăр вăрманпа.
Костёр та сӳнчĕ ерипен
Вăл юлчĕ хыçала.





# ПИРĔН ЮРĂ

Урампа эпир иртетпĕр,
Чаплă юрă юрласа.
Савăнатпăр, хĕпĕртетпĕр,
Тав тăватпăр пурнăçа.

Сывлăшра янрать илемлĕн
Пирĕн юрă çĕкленсе.
Пирĕн пурнăçăм телейлĕ,
Чаплă пирĕн кунĕсем.

Эпир лайăх вĕренетпĕр,
Пирĕн пысăк ĕмĕтсем.
Пурте, пурте çитĕнетпĕр,
Чечексем пек ешĕрсе.

Эпир пурнăçăн—чечекĕ,
Пире Сталин юратать,
Вăл çĕн пурнăçăн—хĕвелĕ
Çĕршыва йăлт çутатать.

Урампа эпир иртетпĕр,
Чаплă юрă юрласа.
Савăнатпăр, хĕпĕртетпĕр,
Тав тăватпăр Сталина.

---

## ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Чечек | 3 |
| Пирĕн çулпуç | 4 |
| Эпир чечек | 5 |
| Летчик пулатăп | 6 |
| Салам | 7 |
| Пионер сăмахĕ | 9 |
| Пичче | 10 |
| Май | 11 |
| Каяр çырлана | 12 |
| Чĕвĕл чĕкеçсем | 13 |
| Çу кунĕ | 14 |
| Пахчана кĕрсе | 15 |
| Улăх | 16 |
| Пирĕн кӳлĕ | 18 |
| Костёр | 19 |
| Пирĕн юрă | 22 |

Отв. редактор Кузьма Чулгась.
Тех. редактор Ф. Я. Яковлев.
Отв. корректор А. М. Алюшин.

Послано в произвол. 22/IV-40 г.
Подписано к печати 21/VI-40 г.
Уполн. Чувашглавлита № 1078.
Зак. № 310. Тираж 5000 экз.
Ф. б. 60×92 1/16. Объем 1,5 п. л.

1-я типография НКМП ЧАССР
гор. Чебоксары. Дом печати.

Цена 50 коп.

ИВАН МАЛГАЙ

# С Т И Х И

Чувашгосиздат — 1940